Р-32
27047-ЧУВ

# РЕВОЛЮЦИЧЧЕНХИ ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРИ

I ТОМ

Чӑваш
кӗнеке
издательстви

## Утӑ ҫулни

Ҫӑв* кунӗнче хирте ҫеҫке ӳсет,
Ҫын ҫавапа сулӑнса ҫулать,
Ҫеҫкесен хушшинче ҫырла пиҫет,
Ҫава айне кӗрейсе ҫухалать.
Утӑ ҫулакан ҫулса карта тӑвать,
Миҫе карта тунине хӑй сӑвать.

Ун умӗнчен шӑрчӑк вӗлтӗр тӑвать,
Утӑ айне кӗрет те ҫухалать.
Ҫутӑ-ҫутӑ ҫава яр ҫаврӑнса
Пӗтӗм хире ҫуталса курӑнать.
Ҫутӑ-ҫутӑ ҫавана ҫын хӑйраса,
Ҫава сасси хир тӑрӑх янӑрать;
Ҫава сасси хир тӑрӑх янӑранӑ чух
Вӗҫен кайӑк йӑвинчен парт! вӗҫет.
Вӗҫен кайӑк йӑвинчен парт! вӗҫнӗ чух
Утӑ ҫулакан хӑй пуҫне ялт! ҫӗклет.
Вӗҫен кайӑк йӑви пӑсӑлнӑшӑн
Мӗскӗн-мӗскӗн сассипе кӑшкӑрать,
Утӑ ҫулаканӑн хытӑ кӑмӑлӗшӗн
Кайӑк сасси нимсӗрех ҫухалать.

[1898]

## Çамрăк сăнĕпелен çамрăк ӳсет...

Çамрăк сăнĕпелен çамрăк ӳсет,
Çамрăк ĕмĕрĕ иртет те—сăнĕ ӳкет;
Çамрăк ĕмĕрĕ пур чух вăл савăнать,
Çынтан сăмах илтет те — хурланать.
Курайман çын çисе сăмах тăвать,
Çамрăк чĕре ырăран кĕвĕçет;
Çамрăк чĕре сăмахпа пит хурланать,
Икĕ куçне хурланса вăл пăсать.
Çутă сăнлă çамрăк чĕрĕ йывăç пек,
Йывăр-йывăр ĕçпе те ывăнмасть;
Чĕрĕ йывăç пăхма çинçе те пек,
Вăйлă-вăйлă çилпе те хуçăлмасть.
Çамрăк çыннăн куçĕ чăр пăхсассăн,
Савнă çынни пулсассăн, йăл кулать;
Савнă çыннипеле калаçсассăн,
Çамрăк чĕри хуйхăрса уйрăлать;
Çамрăк чĕри хуйхăрса уйрăлнă чух
Унăн сăнĕ салху çеç курăнать.
Çамрăк савăнайса пурăннă чух
Çамрăк ĕмĕрĕ иртейсе ватăлать.
Çамрăк ĕмĕрĕ иртсе, вăл ватăлсан,
Вилĕмĕ çывăх иккенне вăл сисет;
Хăйĕн ватă шухăшпе шухăшласан,
Суя чаппа мухтавран вăл писет.
Çамрăк сăнĕпеле çамрăк ӳсет,
Çамрăк ĕмĕр иртет те — сăнĕ ӳкет.

[1898]